# Вӑйӑран вӑкӑр

Ванюкпа Санькка тата Петюк — виççĕшĕ те улттăмĕш класра вĕренеççĕ, ларасса та пĕр çĕреллех, кӳршĕллĕ лараççĕ. Санькка задачăсем хисеплеме ăста, Петюк ташă-юрă тесен каçса каять, Ванюк вара физкультура енĕпе питĕ пултаруллă. Вăл ик алли вĕççĕн пуçхĕрлĕ утать, турник çинче кăлтăрмачă пек вăр та вар çаврăнать, чупмалла е сиксе кăтартмалла тесен, шкулĕпе те ăна çитекенни çук. Ахальтен мар вăл хăй ячĕпе илнĕ парнесемпе шкул библиотекинчи кĕленче çулĕке йăлт илем кĕртсе тултарнă ĕнтĕ. «Маттур», — мухтать ăна физкультурăпа вĕрентекен Тарас Иванчă яланах. «Ну пултарать те пирĕн Ванюк!» — тĕлĕнеççĕ ачасем те.

Вылянă чухне Ванюк тантăшĕсем хушшинче кирек хăçан та вăйă пуçарса яраканни. Кăпăшка юра чăмартаса «Хам, патшалла» вылямалла-и е пĕр-пĕрне пăр катăкĕпе тапса тивертмелле — Ванюк нихçан та махха паракан йышши мар.

Пĕррехинче, шкулта уроксем пĕтнĕ хыççăн, вĕсем виççĕшĕ те класран чи кайран тухрĕç, васкамасăр килнелле утрĕç.

Эпĕ сиртен чи вăйли, — терĕ Ванюк, юлташĕсем умĕнче кăшт мухтанарах.

Вăйлине вăйла та, çак йывăçа тĕксе хускатаймастăн ак, — тесе хĕтĕртрĕ ăна Петюк.

Урам хĕрринчи юмана куçпа виçсе илчĕ Ванюк, аллисемпе ытакласа, тĕксе те пăхрĕ, силлентересшĕн пулчĕ — йывăç тапранмарĕ.

Çав юманран инçех мар пусă пур. Ун патĕнче валашка пăрланса ларнă. Ванюк ăна урипе тапрĕ те туntерсе ячĕ.

— Кам çакна çĕклеме пултарать? — тесе ыйтрĕ вăл, юлташĕсене çĕнтеруллĕн пахса. Валашки сахалтан та икĕ пата яхăн туртать пуль.

Санькка пуçне сулкаласа илчĕ. Петюк нимĕн те шарламарĕ.

— Хăратăр-и? — каллех ыйтрĕ вĕсенчен Ванюк.

— Хăраса мар та, мĕне кирлĕ ăна çĕклеме?

— И-и, каларăн! Эп ăна çĕклеме кăна мар, ав çав çырмана çитерсе пăрахма пултаратăп, хапартланчĕ Ванюк.

— Çĕклейместĕн! — тесе хучĕ Петюк.

— Çĕклейместĕп-и?

— Çĕклейместĕн.

— Ан хăтлан, Ванюк, — чарма тăрăшрĕ ăна Санькка. — Кунта вăл кĕпе çăвакансене кирлĕ. Тем курасси те пулĕ тата...

Анчах Ванюк ун сăмахне хăлхине чикмерĕ. Хăй умĕнчи валашкана вăл ик аллипе меллĕн çавăрса тытрĕ те кăкăрĕ тĕлне çĕклерĕ, талпăнса малалла ута пуçларĕ.

— Ха, чăнах та вăйлă-çке пирĕн Ванюк!—Тĕлĕннипе куçĕ чарăлсах кайнă Петюкăн.

— Пăрах кирлĕ мара, Ванюк! — кăшкăрса ячĕ Санькка.

Ванюк çаплах пăрахмарĕ хăйĕн çĕклемне. Вăл, пашкаса сывласа, çырма хĕррине çитрĕ, валашкана пăрахма кăна тăчĕ— теплерен шуса кайрĕ те çийĕнчех хутланса ӳкрĕ, çĕклемĕ лăштăрах лачлатрĕ ури çине. Ванюк чăтайманнипе ахăрса, кăшкăрса ячĕ. Валашки çырманалла йăваланса анчĕ. Ванюк ӳкнĕ çĕртен çаплах тăраймасăр выртать.

— Мĕн пулчĕ сана, Ванюк? — Санькcapa Петюк ун патне чупса пырса пĕшкĕнчĕç, юлташне тама пулăшасшăн пулчĕç.

Ванюк çав-çавах тăраймарĕ. Унăн куçне çутă-çутă тумламсем карса илчĕç. Санькка вара хăвăртрах телефон патне чупрĕ, васкавлă пулăшăва чĕнтерчĕ.

Часах тухтăр çитрĕ те, Ванюка машинăна çĕклесе вырттарчĕç, çавăнтах больницăна леçрĕç.

Мĕскĕн Ванюкăн сылтăм ури шăмми темиçе çĕртен хуçăлнă иккен.

Больницăра вăл уйăх ытла выртрĕ, сывалса тухсан та мăшăр туяпа çеç тĕренсе çӳрокен пулчĕ.

— Туйине пăрахăн-ха эс, — терĕ ăна тухтăр асатнă чух, —

ӗмӗрлӗхе уксах юлмӑн-и, акӑ мӗн шиклентерет мана.

Ҫакӑ шиклентерет ҫав Ванюка хӑйне те.

*Илпек, М. Вӑйӑран вӑкӑр : [калав] / М. Илпек // Чӑваш литературин антологийӗ. — Шупашкар, 2015. — [Т. 4] : Ача-пӑча валли ҫырнӑ хайлавсем. — С. 149.*